Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

16 (8180) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи пуш (март) уйăхĕн 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Юратаççĕ ăна ачасем

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Валериановна Алексеева Чуманкассинчи вăтам шкулта вăй хурать. Вырăс чĕлхипе литературине кунта вăл çирĕм пиллĕкмĕш çул вĕрентет. Хăйĕн предметне питĕ лайăх пĕлнипе, çавăнпах ачасене тарăн пĕлӳ панипе палăрса тăрать вăл.

Светлана Валериановна – ырă кăмăллă, кашни ачана ăнланма пултаракан тата çирĕп ыйтакан учитель. Çакăншăн юратаççĕ те ăна ачасем, вĕренсе тухнисем вара кашни тĕл пулмассерен тав сăмахĕ калаççĕ. Учитель уроксем хыççăн та ачасемпе чылай тимлет: кашни çул тенĕ пекех ачасене патшалăх пĕрлехи экзаменĕсене е аттестацине хатĕрлемелле, проектсем çырмалла, олимпиадăсене хатĕрленмелле, хăйĕн класĕпе те тĕрлĕ мероприятисем ирттермелле... Тăрăшуллă педагог кашни ĕçе вăхăтра пурнăçлать, ачасене те вăхăтпа туллин усă курма хăнăхтарать.

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ӳкерчĕкĕ.

Ĕçре хастар

Вĕренӳ

Шкула кайма хатĕрленĕр

Ашшĕ-амăшĕн ачине пĕрремĕш класа ярас умĕн ăна шкула илме йытса заявлени çырмалла. Çак заявленисене йышăнас тапхăр мартăн 1-мĕшĕнче пуçланчĕ.

Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З. Дипломатова пĕлтернĕ тăрăх Федерацин «Вĕренӳ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн ачасене шкула илес йĕркене пирĕн районта та ятарлă постановленипе çирĕплетнĕ. Шкула вĕренме йышăнас йĕрке вĕренӳ учрежденийĕ çумне çирĕплетнĕ урамсенче тата ялсенче пурăнакансене ыттисенчен малтан йышăнма ирĕк парать. Шкулти пĕрремĕш класс палăртнă чухлĕ (25 ача) тулмасть пулсан унта ытти вырăнта пурăнакансене те (прописка тăрăх) йышăнма право пур. Çапла вара шкул администрацийĕн официаллă сайтра, массăллă информаци хатĕрĕсенче 1-мĕш класа миçе ача йышăнасси пирки, пушă вырăнсем пуррипе çукки çинчен информаци вырнаçтармалла.

Территорие пăхса çирĕплетнĕ ялсенчен çывăхри шкула 1-мĕш класа каяс текенсенчен заявленисене июлĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Ачана шкула вĕренме илни çинчен çакăн хыççăн 7 кун хушшинче хушу кăлармалла. Çывăхри мар, урăх вырăнти шкула ачана 1-мĕш класа ярас тесен заявление çав шкулта пушă вырăнсем пуррине кура августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа класс туличченхи тапхăрта çырма юрать, анчах та сентябрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр.

Аса илтеретпĕр, Раççей Федерацийĕн «Вĕренӳ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн ачасене шкула 6 çул çурăра вĕренме илме юрать. Паллах, вĕсен сывлăхĕ енчен хирĕçлевсем çук пулсан.

Н. НИКОЛАЕВА.

Ыйтăм

Патшалăх ертӳçисене ытларах шанаççĕ

2013 çулта Чăваш Енре пурăнакансем Раççей Федерацийĕн тата республикăн патшалăх влаç ертӳçисене шанассин шайĕ ӳсни палăрать. Раççей Президентне Владимир Путина Чăваш Республикин çыннисен 66 проценчĕ шанать. Ку вăл çĕр-шыв ертӳçине шанманнисенчен (26 процент) 2,5 хут нумайрах. Премьер-министра Дмитрий Медведева шанасси 55 процента çитнĕ, шанманнисем – ыйтăма хутшăннисен 34 проценчĕ. Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева республикăра пурăнакансен 57 проценчĕ шанать, 29 проценчĕ шанмасть. REGNUM информаци агентствине «Социс-М» тĕпчев компанийĕнче çакăн пек даннăйсем панă.

«Социс-М» директорĕ Дмитрий Борцов çавна палăртнă. Шанаслăх шайĕ ӳсни унччен шанманнисем сахалланнипе çыхăннă. Хурав пама тытăнса тăракансен проценчĕ улшăнман: Путин тĕлĕшпе ыйтăма хутшăннисен 8 проценчĕ, Медведев тĕлĕшпе – 11 проценчĕ, Игнатьев тĕлĕшпе – 14 проценчĕ татăклă хурав парайман.

Ыйтăма 2013 çулхи октябрь – ноябрь уйăхĕсенче социологсен Чăваш Республикинчи «Социс-М» общество организацийĕ ирттернĕ.18 çултан аслăрах ӳсĕмри 16350 респондента ыйтса тĕпченĕ.

Аса илтеретпĕр. Общество шухăшне тĕпчекен Пĕтĕм Раççей центрĕн даннăйĕсем тăрăх Раççей Президенчĕн ĕçне-хĕлне хак парассин рейтингĕ юлашки икĕ çулта çакăн пек пысăк ӳсĕме çитме пултарнă: юлашки эрнере унăн позицине ырлакансем 67,7 процент пулнă. Çакă Олимп вăйăисен кăтартăвĕсемпе, çавăн пекех Украинăри политика тĕлĕшĕнчи йĕркесĕрлĕхсемпе тата граждан вăрçи тухас хăрушлăхпа танлаштарнин эффекчĕпе çыхăннă.

Граждансене йышăнаççĕ

«Единая Россия» партин Муркашри вырăнти уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене март уйăхĕнче çак йĕркепе йышăнаççĕ:

Мартăн 7-мĕшĕнче – Игорь Васильевич Николаев, район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ, партин вырăнти политканашĕн членĕ.

Мартăн 14-мĕшĕнче – Ростислав Николаевич Тимофеев, район администрацийĕн пуçлăхĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн секретарĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче – Владислав Николаевич Семенов, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн генеральнăй директорĕ, партие майлисен канашĕн председателĕ, партин вырăнти политканашĕн членĕ.

Мартăн 28-мĕшĕнче – Николай Григорьевич Ванеркин, акционерсен «Чувашиякурорт» хупă обществин генеральнăй директорĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, партин вырăнти политканашĕн членĕ.

Граждансене асăннă кунсенче 13 сехетрен тытăнса 15 сехетчен йышăнаççĕ.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

Халăхпа сӳтсе явăççĕ

Муркаш район пуçлăхĕн – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн депутатсен районти Пухăвĕн «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2013 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен» йышăнăвĕн проектне район администрацийĕн ларусен залĕнче мартăн 6-мĕшĕнче халăхпа сӳтсе явма палăртнă. Мероприяти 10 сехетре пуçланать.

Камсем пурăнаççĕ пирĕн районта?

Районта наци политикин ыйтăвĕсемпе ĕçлесси – наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен канашăн компетенцийĕнче. Иртнĕ çул вĕçĕнче канашăн кăçалхи ĕç планне çирĕплетнĕ. Пĕрремĕш кварталта унăн ларăвне ирттерме палăртнă. Иртнĕ çул ытти наци представителĕсемпе темиçе тĕл пулу ирттернĕ. Вăл шутра Хорнуй ял тăрăхĕн территорийĕнчи «Путь Ильича» агрофирмăра ĕçлекен мигрантсемпе те. Юлашки çырав итогĕсемпе вара Муркаш районĕнче çак наци представителĕсем пурăнаççĕ:

– чăвашсем – 97,1% (республикăра 67,7%);
– вырăссем – 2,3% (26,9%);
– тутарсем – 0,1% (2,8%);
– украинсем – 0,1% (0,4%);
– çармăссем – 0,3% (0,3%);
– ыттисем – 0,1% (1,9%).

Мăн Токшикра ФАП çĕкленĕ

Иртнĕ çул республика пулăшнипе çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ Шомикра ĕçлеме тытăннăччĕ. Кăçал вара сывлăх сиплевĕн ялти кун пек учрежденине Мăн Токшикра уçма палăртнă. Хальхи вăхăтра çĕнĕ ФАП хута яма çĕр участокĕ уйăрма документсем хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ.

«Полици тата ачасем»

Февралĕн 28-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 28-мĕшĕччен районти мĕн пур вĕренӳ учрежденийĕсенче «Полици тата ачасем» акци иртет. Акцие çул çитмен ачасем, вĕсем преступлени тăвассине асăрхаттарас енĕпе ĕçлекен учрежденисен, общественноç представителĕсем хутшăнаççĕ. Ачасемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕпе тĕл пулусем, пухусем, калаçусем ирттереççĕ, фильмсем кăтартассине йĕркелеççĕ. Асăннă мероприятисенче уголовлă, административлă тата ĕç законодательствисем, çул çӳремелли правилăсем пирки ăнлантарса парасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Кану кунĕсенчи ăмăртусем

Пирĕн район спортпа чăннипех туслă. Çакна спортсменсен район, республика, çĕр-шыв шайĕнчи çитĕнĕвĕсем те çирĕплетеççĕ. Ăмăртусем тенĕрен вара – вĕсем кашни канмалли кунах. Хăш чухне пĕрре те мар.

Иртнĕ канмалли кунсенче те çаплах пулчĕ. Мартăн 1-мĕшĕнче кăçалхипе 12-мĕш хут Чăваш Республикин чемпионне Юрий Федотова асăнса Калайкасси шкулĕн трасси çинче йĕлтĕрçĕсен республикăри эстафета ăмăртăвĕсем иртнĕ. Çав кунах шашкăлла выляма кăмăллакансем район хаçачĕн редакцине пухăннă. Кунта шашкăлла выляса «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн йăлана кĕнĕ турнир пулнă.

Тепĕр кунне, мартăн 2-мĕшĕнче, Муркашри йĕлтĕр базинче йĕлтĕрпе чупса ăмăртассипе шкул ачисен спартакиади тата ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче ăмăрту иртнĕ.

(Иртнĕ ăмăртусем пирки тĕплĕнрех – çитес номерте).

Мартăн 9-мĕшĕнче вара харăсах виçĕ ăмăрту иртмелле. Хĕрарăмсен командисем «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче К.Л. Валицкая парнисене çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе ăмăртĕç. Кунти хоккей площадкинче вара хоккейла выляссипе уçă турнир иртĕ. Муркаш шкулĕнче хĕллехи мини-футболла выляссипе район чемпионачĕ пулмалла.

В. ШАПОШНИКОВ
хатĕрленĕ.

Хăрушлăха сирме пĕрлĕх кирлĕ

Наркомание хирĕç

Наркотика хирĕç кĕрешекен районти комиссин черетлĕ ларăвне хутшăнакансем паянхи çивĕч ыйтусене палăртса вĕсене татса памалли майсене сӳтсе явăç.

Малтанах район прокурорĕн çумĕ Юрий Семенов районти сывлăх сыхлавĕпе, вĕренӳ учрежденийĕсем, йĕркене сыхлакан органсем тата обществăлла организацисем наркомание тата наркотикăн саккунсăр çаврăнăшне асăрхаттарассипе мĕнле ĕçлени пирки пĕлтерчĕ. Юрий Мефодьевичăн сăмахĕнчен кашни орган хăйĕн ĕçне епле туса пыни, анчах та вĕсем хушшинче çыхăну ямăхрах пулни курăнчĕ. Çавăнпа та малашне пурте пĕрле ĕçлесе пымалли утăмсене палăртрĕç, ачасемпе çамрăксене тимлĕх ытларах уйăрмаллине каларĕç. Вĕсемшĕн ытларах пăшăрханма тивет, мĕншĕн тесен пирĕн район урлă федераци пĕлтерĕшлĕ автоçул та иртет, Шупашкар та инçе мар.

Муркашри тĕп больницăри нарколог врач Александр Строганов наркотик йышăнакансем больницăна хăй тĕллĕн килменнине калать. «Çынсен çак категорине эпир ытларах чухне вĕсем йĕркене пăсса полицейскисен аллине çаклансан тин пĕлетпĕр, хамăр патра учета илетпĕр. Муркаш районĕнче çуралнă, халĕ Шупашкарта вĕренекенсем е ĕçлекенсем пирки вĕсем наркотик е ытти психотроплă хутăшсене йышăннăран наркологи диспансерне лексен кăна пĕлме пултаратпăр, çитменнине ку сведенисем те пирĕн пата тӳрех çитмеççĕ», – тет Александр Андреевич. Апла пулсан профилактика ĕçĕ самай хавшать. Наркотик йышăнакан çын пирки тепĕр çулталăкран кăна пĕлсессĕн, унччен вăл çак ĕçе кама явăçтарма пултарнине те чылай кая юлса шутласа кăларма пулать. Çавăнпа та комисси членĕсем çак даннăйсене çийĕнчех тата тăтăш илсе тăрас тĕллевпе çырупа тухма йышăнчĕç.

Наркотикăн сиенĕ пирки калаçнă чух халĕ ытти тĕрлĕ сиенлĕ хутăшсене туртни пирки те каламасăр иртме çук – ку та питĕ пысăк хăрушлăх. Уйрăмах çамрăксене асăрхаттармалла тата вĕсене асăрхаса тăмалла. Туртмалли хутăшсемпе усă куракансем сӳрĕк, пусăрăнчăк, хусканăвĕсем те пур чухне шайлашуллă мар, куç шăрçи пысăк, çутăпа вылятса тĕрĕслесен те вăл улшăнмасть. Çак паллăсем майĕпен чир патнех илсе пыраççĕ. Ун чух лару-тăру вара тата хăрушăрах – ача е çамрăк ют çынсенчен пăрăнать кăна мар, тăванĕсемпе, юлташĕсемпе те хутшăнма пăрахать. Килтен япаласем çухалма пуçлани те çак чирпех çыхăнма пултарать – укçа кирлĕрен çамрăксем вĕсене çав сиенлĕ хутăшсемпе ылмаштарма та тăхтаса тăмаççĕ. Хăйсен усал та хăрушă чирне пулах тантăшĕсенчен е кĕçĕнреххисенчен укçа тапăнса ыйтма та пултараççĕ.

Çакăн пек паллăсене асăрхасан ашшĕ-амăшĕн, учительсен е аслисен ачана врачпа канашласа илме ӳкĕте кĕртмелле – вĕсем хăйсем тĕллĕн çак авăртан тухаймаççĕ, вĕсене пулăшу кирлĕ. Кун пек тĕслĕхе тупса палăртсан, уйрăмах çамрăка ӳкĕте кĕртме йывăр пулсан, психолога е нарколога пĕлтерни ытлашши пулмĕ. Тен вĕсем «ăнсăртран» çак ачапа тĕл пулса каласăç.

Çак чир çыннăн кăмăл-сипечĕпе çыхăннăран Православи Чиркĕвĕ те ку тĕлĕшпе хăйĕн тивĕçне пурнăçлать, çынна йывăрлăхра пулăшассинчен ку таранччен вăл нихăçан та пăрăнман. Пирĕн районти чиркӳ настоятелĕсем те йывăр самантсенче пулăшу кӳме хатĕррине палăртрĕç.

Наркомание хирĕç кĕрешес тĕллевпе ларура каçхиçĕрлехи рейдсене йĕркелесси пирки, 8–11 классенче ятарлă ыйтăмсем ирттересси пирки, ачасемпе çамрăксене наркоманин социаллă хăрушлăхĕ пирки тата унпа саккунсăр усă курнăшăн уголовлă яваплăх пăхса хунине ăнлантармалли пирки те йышăнусем турĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ларăва пĕтĕмлетсе каланă сăмахсене: «Наркоманин социаллă хăрушлăхĕ пысăк, çавăнпа та профилактика ĕçне пурин те пĕрле туса пымалла тата çак йышăнусене пирĕн пурин те асра тытмалла, вĕсене пурнăçламалла», – тенине кашниех ăса хыврĕ пулĕ. Апла пулсан асăрхаттару ĕçĕ чăнах та пурнăçланмалла.

Н. НИКОЛАЕВА.

Юбилей

Саламлатпăр

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Ваçкасси ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă **Мария Алексеевна ФЕДОТОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, юман пек сывлăх сунатпăр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

Саламп: ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрĕвĕ, мăнукĕсем.

Юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, кăмăллă асаннене – Кăпас ялĕнче пурăнакан **Василиса Николаевна ПЕРОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, виçĕ мăнукĕ, тăхлачисем.

Чи хаклă çыннăмăра, мăшăра, ывăлăма, аттене, шăллăма, пиччене, тăванăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Валерий Александрович ФЕДОРОВА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕн телей, савăнăç. Сывлăху çирĕп пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр, çӳлти хăват вăй патăр. Тавах ырă кăмăлушăн, тарават пулнишĕн.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ачисем, Федоровсен, Васильевсен, Корнеевсен çемйисем, мĕн пур çывăх тăванĕ.

Чи хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, çепĕç кукамая – Кĕртекасси ялĕнче пурăнакан **Светлана Васильевна ИЛЛАРИОНОВĂНА** 65 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Çак пурнăç çулĕпе утса санăн татах нумай çул ырă курса, пире савăнтарса тата пирĕн савăнăçпа хăвăн хĕпĕртесе пурăнмалла пултăр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

Саламп: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аннене, ырă кăмăллă асаннене, пултаруллă юлташа – Ойкас ялĕнче пурăнакан **Нина Ивановна ШИШОКИНĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн хĕрӳллĕн саламлатпăр. Пурнăçăн тумхахлă та анлă çулĕпе йывăрлăхсене çĕнтерсе шанчăклă утса пыма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Ырă та çутă ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр. Яланах хальхи пек ăшă кăмăллă, хастар та пултаруллă пул. Çывăх çыннусен ăшши сана вăй-хăват парса тăтăр.

Хисеплĕ Нина Ивановна, утас çулу яланах анлă та такăр пултăр!

Ăшă саламп: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕ, мăнукĕсем Романпа Дарья, тус-юлташĕсем.

Йĕркелĕхе сыхласси – пурин тивĕçĕ

Хăрушсăрлăх

Муркаш районĕнче право йĕркине пăсассинчен асăрхаттаракан комиссин анлă ларăвĕнче сӳтсе явма кун йĕркине пысăк пĕлтерĕшлĕ тăватă ыйту кĕртнĕччĕ: районта пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессине мĕнле пурнăçлани, йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене ӳсĕрле тăвассине асăрхаттарасси, çул çитменнисене преступлени тăвассинчен асăрхаттарасси тата вĕсене пăхса тăрасси пирки, юсану учрежденийĕсенчен таврăннисен социаллă хăнăхăвĕ çинчен. Ларăва вара йĕркелĕхшĕн яваплă пулса тăракан пур сфера представителĕ те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те хутшăнчĕç.

Ларăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев Канаш районĕнчи Шăхасанта пулса иртнĕ инкек пирки аса илтернинчен пуçларĕ: кунта çулăмра амăшĕпе унăн виçĕ ачи – пĕр çулхи, икĕ çулхи тата виçĕ çулхи ачасем вилнĕ. Çулăм хыççăн кĕл тата фанфурик кĕленчисен купи кăна юлнă. Мĕн тери пысăк инкек тата хуйхă!

Пушар хăрушсăрлăхĕ чăнах та çивĕч тăнине шута илсе Етĕрне районĕнче акă кашни кил хуçалăхрах огнетушитель илесси пирки йышăну тунă: пушар тухас пулсан çулăма малтанах пилĕк-ултă çын та пулин огнетушительпе сӳнтерме пуçлани те кăшт пулăшмалла. Патăрьелсем вара хальлĕхе килсенчи электричество пралукĕсене тĕрĕслеме йышăннă, мĕншĕн тесен нумайăшĕ малтан карнисем, халĕ вара кашнийĕнех йăлари техника та чылай – чăтмасан та пултараççĕ.

Пирĕн районти пушар лару-тăрăвĕ пирки каланă чух район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ Г. Любимов çулталăк пуçланнăранпа 8 пушар тухнине пĕлтерчĕ, çулăмра пĕр çын вилнĕ. Пушарсен хисепĕ те пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан нумайрах. Тĕп сăлтавĕсем – электричество пралукĕсем юсавсăр тата çынсем çулăмпа асăрханусăр пулни. Çавăнпа та вăл ял тăрăхĕсенче обществăлла комиссисем йĕркелеме сĕнчĕ. Çак комисси ялсенчи кил хуçалăхĕсенче пушар хăрушсăрлăхĕ мĕнле шайрине тĕрĕслесе граждансемпе инструктаж ирттерме тивĕç. Кун пек ĕçе пур предприяти-организацире те ирттерме, шкул ачисемпе те асăрхаттару ĕçне ятарлă планпа йĕркелеме çирĕплетрĕç.

Вăхăта вăраха тăсмасăр мартăн 10-мĕшĕ тĕлне çĕнĕ комиссисене йĕркелесе вĕсен ĕçе пуçăнмаллине палăртрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев районти кашни яла пушар машинисен 20 минутран кая юлмасăр çитмеллине аса илтерчĕ, çавăнпа та пушар хуралĕн ĕçне апрелĕн 1-мĕшĕччен кирлĕ шая çитермеллине палăртса каларĕ.

Пушарсем кăна мар, эрех ĕçсен йывăр преступлени тăвасси те (вăл шутра çынна вĕлерни) районта пĕрре мар пулнă. Район прокурорĕн çумĕ Ю. Семенов каланă тăрăх полици пайĕпе ял тăрăхĕсем хушшинчи çыхăну лайăхах мар иккен, хăшпĕр ял тăрăхĕсенчи профилактика канашĕсен ĕç планĕнче конкретлă мероприятисем те палăртман. Малашне вара профилактика ĕçне ял тăрăхĕсенче тимлĕх ытларах пулĕ – район прокурорĕ С. Павлов ку тĕлĕшпе çирĕп контроль пуласса пĕлтерчĕ. Апла вырăнсенчи профилактика канашĕсем хăйсен обществăлла тивĕçне кирлĕ пек пурнăçласса шанмалла. «Чăваш Республикинче право йĕркине пăсассине асăрхаттарасси çинчен» ЧР саккунĕ вара профилактика ĕçне туллин пурнăçлама май парать.

Эрех ĕçни преступленисем тăвассин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ĕçекенсем вара сахалланмаççĕ-ха. Акă районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов пĕр эрнере васкавлă пулăшу бригадисем пурĕ 105 чĕнĕве тухнă пулсан, вĕсенчен 10 хутĕнче эрехпе наркăмăшланнисем патне çитме тивнине пĕлтерчĕ, ку вăл эрех ĕçнĕрен ытти чирсемпе аптăранисемсĕр пуçне. Хăш-пĕр уйрăм предпринимательсем вара хăйсен укçа енчĕкĕсене тултарас тĕллевпе халăха йӳнĕ, анчах та питĕ сиенлĕ спирт пур шĕвексем (фанфуриксем) сутаççĕ – халлĕхе вĕсене нимĕнле сăмахпа та (шел пулин те, чаракан саккун çук) ӳкĕте кĕртме май çук-ха. Тĕрĕс калать В. Данилов: «Фанфуриксем сутнипе кăна хăйсен бизнесне тытса тăма тараççĕ пулсан вĕсем – бизнесменсем мар, ултавçăсем кăна».

Çын йĕркеллĕ пуласси çемьерен ытларах килет, анчах та ачан пурнăçĕнче шкул та пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та çул çитменнисене преступленисем тăвассинчен асăрхаттарас тĕллевпе районти шкулсенче тĕрлĕ секци-кружоксене çӳреме, апла пулсан вăхăта усăллă ирттерме май туса параççĕ. Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова каланă тăрăх йĕркене пăсма пултаракан 105 ачаран акă 65-шне унта явăçтарнă. Çуллахи вăхăтра йĕркелекен лагерьсене вара пурне те йышăнса вĕсен сывлăхне çирĕплетме пулăшаççĕ. Ачасене аталанма пĕтĕмпех пур темелле, анчах та пур ашшĕ-амăшĕ те ачисене тимлĕх çителĕклĕ уйăрманнине те манмалла мар. Çавăнпа та Р. Тимофеев педагогсен инкексене асăрхаттарма тăрăшмаллине тепĕр хут аса илтерчĕ.

Юсану учрежденийĕсенчен таврăннисен социаллă хăнăхăвĕ йĕркеллĕ иртни те – обществăлла лăпкăлăх çине витĕм кӳрекен пулăм. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе ĕç тăвакан уголовлă инспекципе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата профилактика субъекчĕсем хушшинчи çыхăнăва тачăрах йĕркелесси пирки те йышăну турĕç.

Н. ДИМИТРИЕВА.

Астăвăм

Вĕсен ячĕ ан манăçтăр

Гранитная плита памяти Открыта 26 мая 2012 года

Нумаях пулмасть эпĕ Виталий Золотовпа курса каласăрăм. Виталий Арсеньевич – Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, отставкăри пĕрремĕш ранг капитанĕ, доцент. Вăл Элĕк районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Санкт-Петербург хулинче пурăнать. Чăвашсен Санкт-Петербург хулинчи ентешлĕхĕ (Санкт-Петербургăн Чăваш наципе культура автономийĕ) пирки калаçса кайрăмăр.

Ентешлĕхĕн тĕп ĕçĕсенчен пĕри – Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Ленинграда хӳтĕленĕ тата хулана блокадăран ирĕке кăларнă чухне пуçĕсене хунă хамăр ентешсем пирки материалсем пухасси.

Архив материалĕсене тĕпченĕ май çавна тупса палăртма май килнĕ. Ленинграда тата Ленинград облаçĕнче пĕрлехи масарсенче Чăваш Енре çуралса ӳснĕ 5 пин ытла салтака пытарнă. Пискаревăри асăну комплексĕнче пытарнисем 300.

Пискаревăри асăну комплексĕ – иккĕмĕш тĕнче вăрçинче пуç хунисене пытарнин чи пысăк масарĕ. Кунти 186 масарта выçăпа, бомбăсем, снарядсем çурăлнипе, сивĕпе шăнса вилнĕ 420 пин Ленинград çыннине тата хулана хӳтĕленĕ 70 пин çар çыннине пытарнă.

Чăвашсен Санкт-Петербург хулинчи ентешлĕхĕн пуçарăвĕпе Пискаревăри асăну комплексĕнче 2012 çулхи майăн 26-мĕшĕнче асăну гранит плитине уçнă. Ăна уçнă çĕре Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пыракан делегаци те хутшăннă.

Палăк çине Чăваш Республикин Гербне ӳкернĕ, унтах çапла çырса хуни пур: «Вечная слава героям – уроженцам Чувашии, погибшим при обороне и снятии блокады Ленинграда!».

Çак масарта канлĕх тупнисем хушшинче Муркаш районĕнче çуралса ӳснисем те пур. Кусем вĕсем:

– Кузьма Архипович Архипов (1902 ç.ç.) – Вăрманкас Хачăк;

– Василий Игнатьевич Игнатьев (1906 ç.ç.) – Муркаш;

– Михаил Александрович Коваленко (1919 ç.ç.) – Мăн Сĕнтĕр;

– Василий Максимович Кольцов (1911 ç.ç.) – Ятман;

– Николай Петрович Лаптев (1914 ç.ç.) – Кăпас;

– Николай Евлампьевич Леонтьев (1917 ç.ç.) – Оринин;

– Роман Леонтьевич Леонтьев (1907 ç.ç.) – Исетеркĕ;

– Архип Михайлович Михайлов (1898 ç.ç.) – Тойкилтĕ;

– Иван Яковлевич Перлов (1914 ç.ç.) – Çеçмер;

– Василий Петрович Петров (1905 ç.ç.) – Кашмаш;

– Иван Павлович Скворцов (1906 ç.ç.) – Мăн Сĕнтĕр;

– Дмитрий Яковлевич Смирнов (1916 ç.ç.) – Çĕн Тăмлай;

– Дмитрий Егорович Сорокин (1909 ç.ç.) – Мăн Тутаркас;

– Изосим Максимович Сорокин (1918 ç.ç.) – Кашмаш;

– Алексей Тихонович Тихонов (1904 ç.ç.) – Рыккакасси;

– Валентин Филиппович Филиппов (1919 ç.ç.) – Уйкас Янасал;

– Андрей Иванович Фролов (1909 ç.ç.) – Пĕрремĕш Май выççăлкки;

– Антон Федорович Фуражников (1908 ç.ç.) – Çатракасси;

– Василий Михайлович Шаландаев (1910 ç.ç.) – Мăн Сĕнтĕр.

Мĕн хистерĕ-ха мана вĕсем пирки çырма? Эпир çынна аса илетпĕр пулсан кăна ас тăвăм чĕрĕ теççĕ. Вĕсене ас тăвакан тăванĕсем, юлташĕсем, кӳршисем, пĕрле вăрçăра пулнисем вара сахаллансах пыраççĕ. Ленинград хӳтĕлевçисене асра тытни вара чи малтанах вĕсен тăванĕсене, çамрăк ăрава – пурне те кирлĕ.

Ленинграда хӳтĕлесе вилнĕ çар çыннисем пирки вĕсен хăш-пĕр тăванĕсем пĕлеççĕ пулĕ. Теприсем тен вĕсене халĕ те шыраççĕ. Хальхи вăхăтра районăн çĕнĕ энциклопедине хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Ленинграда хӳтĕлесе вилнĕ çӳлте асăннă паттăрсен тăванĕсем вăхăт тупса район хаçачĕн редакцине кĕрсе тухасса, сăн ӳкерчĕксем, вилнисен биографийĕсемпе вĕсене аса илнисене илсе пырасса шанса тăратăп.

Ю. ГРИГОРЬЕВСКИЙ.
Шупашкар хули.

Кĕçĕн çăварни – çуркунне тусĕ

Мăн Сĕнтĕрти Хĕл ăсатăвĕн уявĕнчен

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Мăн Сĕнтĕр тата Катькас ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе А. Лаптевпа тата Г. Лебедевпа уяв лапамĕнче.

Хĕл сивви тĕппипех иртмен пулсан та сарă хĕвел çӳле хăпарни, унăн ăшши вăйланни çуркунне алăк умне çитнине систерет. Ашă кунсем алăкран шакканă май çурхи ака-сухаччен те вăхăт нумай юлмасть. Апла пулсан хĕле халăх йĕркипе ăсатса çур акине хатĕрленме пуçламалла. Çăварни икерчипе сăйланнă хушăра çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан ыйтусене сӳтсе яврĕç иртнĕ вырсарни кун Мăн Сĕнтĕрсем.

Пысăк уява вара халăх йышлă пухăннă. Ватти те, вĕтти те Мăн Сĕнтĕр райповĕн сутуçисем сĕнекен икерчĕне вĕри чейпе активсе пăхма хыпаланать.

– Çулсен лавĕ пысăк пулсан та çамрăклăха аса илтерекен çак уявран пирĕн те юлас килмест. Тавах район администрацине, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне çак ырă йăлана сыхласа хăварнишĕн, – терĕ Шомикри куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче 39 çул ĕçленĕ, Раççей потребкооперацин ветеранĕ Людмила Осипова саванăç шевлине пытармасăр.

Эпир сăмахланă хушăра кафе умĕнче йĕркеленĕ сцена çине уява ертсе пыракансем тухрĕç. Кунта Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче ĕçлекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Сцена çинчисем те савăнăçлă, уява килнĕ халăх сăнĕнче те кашнийĕнех йăл кулă тăрать. Пурте пĕр-пĕрне савăк кăмăлпа «Уявпа саламлатăп!» тесе йăл кулă парнелеççĕ. Хут купăс, баян, балалайка çеммипе тата репродуктортан янăракан кĕвĕпе çынсем тĕллĕн-тĕллĕн ташша тухаççĕ, хăюсăртараххисене астарса такмаксем шăрантараççĕ.

– Çăварни вăл – халăх уявĕ. Уйрăм предпринимательсен хастарлăхне курса хамăр магазинсемпе буфетсене те уява тулли кăлартăмăр. Ара хамăр пайщиксем савăнаççĕçке, – сутуçăсенчен вĕри чей е кофе пуррипе кăсăкланать пасар лапамне пырса çитнĕ Мăн Сĕнтĕр райпо правленийĕн ертӳçи Л. Майкова. Çак вăхăтра район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕн ертӳçи А. Федотов халăх хушшине пырса тухрĕç. Пуçлăхсем пĕрле пулни уява тухнисен савăнăçне ӳстерчĕ кăна.

– Вăхăт уттине чарма çук. Паян пĕрле пулса хĕле ăсататпăр. Ыран вара кар тăрса çурхи уй-хир ĕçĕсене тухăпăр. Апла пулсан паянхи ĕçе ырана хăвараканшăн вăхăтра пурнăçламан ĕç хакла ларма пултарать. Хĕл ăсатнă май кун пирки паян кашнийĕнех шутламалла, – терĕ пухăннисене хĕл ăсатăвĕн уявĕпе саламласа Ростислав Николаевич.

А. Федотов вара ял çыннисене патшалăх пулăшăвĕпе анлăрах усă курма тăрăшмалли пирки пĕлтерчĕ. «Патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕ усă курас тесен патшалăх программисемпе килĕшӳллĕн ĕçлемелле. Ĕçлекен çын нихăçан та пулăшусăр юлмасть», – терĕ Александр Иванович хăйĕн сăмахĕнче çывхаракан çур акире ăнăçу сунса.

Карусель çаврăнать – çуркунне çывхарать.

Хĕл каça ырă марпа тулнă Кĕлтепи халăх умĕнчех çунса кайрĕ.

Уяв саламĕсем хыççăн сцена çине художество пултарулăх ушкăнĕсем пĕрин хыççăн тепри хăпарчĕç.

– Артистсен тăрăшулăхĕ пирĕн урасене те ташша йыхăрать. Епле чăтса тăрăн кунта! – савăнăçне пытармарĕ вăтам çулсенчи Г. Огадерова. Курма пынисем артистсемпе пĕрле юрлани-ташлани уяв илемне куç умĕнчех ӳстерчĕ.

Пасар лапамĕнче юрă-ташă янăранă хушăрах ачасем илемлетнĕ лашасемпе катаччи чупни те уяв илемĕ пулчĕ.

Çăварни çитрĕ пулсан çур акиччен шутлă кунсем юлаççĕ. Çавăнпа та хĕвел Турринчен канлĕх тата вăхăтра акма-лартма юрăхлă çанталăк ыйтасси теме те пулать çак кунхи савăнăçа.

Мăн Сĕнтĕрсемпе пĕрлех çак кун Мулкачкассисем те çăварни чупса хĕл ăсатрĕç.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Объявления

УВАЖАЕМЫЕ АБОНЕНТЫ!
ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» напоминает о необходимости соблюдения правил пользования газом в быту

Абоненты обязаны:

• Заключить договор на техническое обслуживание газового оборудования с эксплуатирующей организацией газового хозяйства – филиалами ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» либо другой специализированной организацией, а также на поставку газа с ООО «Газпром межрегионгаз Чебоксары»;

• Обеспечивать доступ работникам филиалов и газовых участков для проведения технического обслуживания газового оборудования, в том числе газобаллонных установок;

• Следить за нормальной работой бытовых газовых приборов, исправностью дымоходов и вентиляционных каналов, проверять тягу до включения и во время работы газовых приборов с отводом продуктов сгорания в дымоход. Периодически очищать «карманы» дымоходов и вентканалов;

• В зимнее время регулярно проверять оголовки дымоходов и вентиляционных каналов, при резких похолоданиях и сильных снегопадах – ежедневно, с целью недопущения их обмерзания и закупорки;

• При внезапном прекращении подачи газа или появлении запаха газа в помещении немедленно закрыть краны на газовых приборах и перед ними, открыть окна, форточки и двери для проветривания. Не разжигать огня, не курить, не включать и не выключать электроосвещение и электроприборы, не пользоваться телефонной связью и электрозвонками во избежание образования искры. Из незагазованного места вызвать аварийную службу газового хозяйства **по телефону 04, 60-2-24** или с мобильного телефона **-112 или 104**;

• При неисправности бытового газового оборудования или автоматики безопасности, отсутствии или нарушении тяги в вентиляционных и дымовых каналах прекратить пользование газовыми приборами, закрыть краны на них, перед ними и вызвать работников газовой службы;

• По окончании пользования газом закрыть краны на газовых приборах и перед ними, а при размещении баллонов внутри кухонь – дополнительно закрыть вентили у баллонов.

Абонентам запрещается:

• Осуществлять перепланировку помещения, где установлены газовые приборы, без согласования с соответствующими организациями;

• Использовать газ и газовые приборы не по назначению. Пользоваться газовыми плитами для отопления помещений;

• Использовать помещения, где установлены газовые приборы, для сна и отдыха;

• Применять открытый огонь для обнаружения утечек газа;

• Хранить в жилых помещениях и в подвалах порожние и заполненные газом баллоны (замену порожних баллонов на заполненные газом необходимо производить только на обменных пунктах, нельзя приобретать баллоны у посторонних лиц);

• Производить самовольную перестановку, замену и ремонт газовых приборов, баллонов и запорной арматуры;

• Закрывать решетки вентиляционных каналов, ограничивать приток воздуха в помещения с газоиспользующим оборудованием;

• Пользоваться газовыми приборами при отсутствии тяги в дымоходах и вентиляционных каналах, при нарушениях плотности кладки, целостности штукатурки, при трещинах в дымоходах, а также при закрытых форточках и решетках вентиляционных каналов;

• Оставлять работающее газоиспользующее оборудование без присмотра (кроме приборов, рассчитанных на непрерывную работу и имеющих для этого соответствующую автоматику);

• Допускать к пользованию газовыми приборами детей дошкольного возраста, лиц, не контролирующих свои действия и не знающих правила пользования этими приборами.

Помните: безопасность каждого зависит от соблюдения правил пользования газом в быту!

ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары».
Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 № ВП-00-011658 (ЖКС).

3 апреля 2014 года на расширенном заседании Рыбохозяйственного совета Нижегородской области будет проведено обсуждение с гражданами и общественными организациями (объединениями) материалов, обосновывающих объемы общего допустимого улова (ОДУ) водных биоресурсов в Горьковском водохранилище в границах Нижегородской, Костромской и Ивановской областей; Чебоксарском водохранилище в границах Нижегородской области и Республик Марий Эл и Чувашия; озерах Галичское и Чухломское Костромской области на 2015 год. Место и время проведения заседания: г. Н.Новгород, Кремль, корп. 1, ауд. 506, 11-00.

С материалами можно ознакомиться на сайте министерства экологии и природных ресурсов Нижегородской области http://mineco-nn.ru в разделе «Водные биологические ресурсы» – подраздел «Квоты и объемы»; в Министерстве экологии и природных ресурсов Нижегородской области по адресу: г. Н.Новгород, ул. Костина, д. 2, каб. 76, тел.: (831) 430-18-34; в Нижегородской лаборатории ФГБНУ «ГосНИОРХ» по адресу: г. Н.Новгород, Московское шоссе, д. 31, тел.: (831) 243-16-09

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики объявляет о предложении подачи заявлений заключить краткосрочный договор с любым лицензированным перевозчиком по внутрирайонному автобусному маршруту «Моргауши–Акрамово»(с понедельника по пятницу)

-отправление из с. Моргауши по предлагаемому расписанию:

7 час. 40 мин.; 8 час. 40 мин; 9 час. 40 мин; 10 час. 40 мин; 13 час. 10 мин; 14 час. 10 мин.; 15 час. 40 мин;

-отправление из с.Акрамово: 7 час. 00 мин.; 8 час. 00 мин; 9 час. 00 мин; 10 час. 15 мин.; 12 час. 50 мин.; 13 час. 50 мин.; 15 час. 20 мин;

до проведения конкурса, но не более чем на 6 месяцев.

Для заключения краткосрочного договора перевозчикам необходимо представить в администрацию Моргаушского района Чувашской Республики следующие документы:

1) заявление о намерении с указанием для юридического лица наименования, организационно-правовой формы, местонахождения, банковских реквизитов, для индивидуального предпринимателя – фамилии, имени, отчества, данных документа, удостоверяющего личность, места жительства, банковских реквизитов;

2) копии учредительных документов для юридического лица или копии документа, подтверждающего личность индивидуального предпринимателя, засвидетельствованные нотариально либо сотрудником уполномоченного органа при сличении с оригиналами;

3) документ, содержащий сведения о количестве и типе транспортных средств, которые будут использоваться на маршруте;

4) документ, подтверждающий полномочия представителя перевозчика (если от имени перевозчика действует представитель).

Перевозчик вправе по собственной инициативе представить следующие документы:

копия свидетельства о государственной регистрации юридического лица;

копия свидетельства о государственной регистрации физического лица в качестве индивидуального предпринимателя;

копия лицензии на осуществление перевозки пассажиров автомобильным транспортом.

В случае если инициатором открытия маршрута не представлены документы, перечисленные в настоящем пункте, администрация Моргаушского района запрашивает указанные документы в порядке межведомственного информационного взаимодействия.

Заявки подаются в рабочие дни с 8-00 час. до 17-00 час. (обед с 12 до 13 час.) с 05 марта 2014 года, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Паллашу кĕтесĕ

54 çулти икĕ ачаллă (пĕри шкулта вĕренет, тепри ĕçлет) арçын лăпкă та ырă кăмăллă хĕрарăмпа паллашасшăн. Тел.: 8-927-860-63-59.

Пулăшнăшăн тав

Пире ĕне выльăх йышне хушма пулăшнăшăн Нискассинчи ветеринари участокĕн ертӳçине Эдуард Вячеславович Савельева, Муркашри ветеринари станцийĕнче ĕçлекен Алина Петровна Федоровăна, Людмила Алексеевна Бояриновăна, «Путь Ильича» агрофирмăра нумай çул хушши чунне парса выльăх тухтăрĕнче ĕçленĕ Калерия Петровна Дмитриевăна район хаçачĕ урлă питĕ пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Сирĕн яланах çирĕп сывлăх та ăнăçу пултăр.

Сире тав туса Исаковсен çемйи.

Мăн Шаптак ялĕ.

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен!
ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА, НТВ+ от 3000 руб. 2-10.
Цифровые эфирные приемники от 1200 руб.
Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Селюшкин Алексей Геннадьевич, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Большие Чуваки, д. 25. Тепеева Нина Николаевна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Яблоневая, д. 59.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:110301:79 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Димитриев Валерий Александрович, зарегистрированный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 23.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Карзаковой М.А., номер квалификационного аттестата № 21-12-49 от 20.12.2012 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:110301:79. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ориниинское сельское поселение, территория землепользования СПК «Восток», западнее д. Молгачкасы.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания земельных участков относительно размера и местоположения границ выделяемого земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.

* * *

ЛЕЧЕБНЫЙ МАССАЖ: взрослый, детский, тонизирующий и расслабляющий, антицеллюлитный, баночный и медовый. Плюс массажная кровать. Тел.: 8-927-842-29-01. Николай.

* * *

Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 2-4.

* * *

Продаю сено в рулонах, первый укос, пресс-подборщик 2012 г.в., тюковый. Тел.: 8-961-340-55-68. 2-5.

Пĕлтерӳсем. Объявления

3-8

выгодные ЗАЙМЫ
- пенсионерам
- на развитие подсобного хозяйства
- под залог а/м, на покупку а/м
- на хозяйственные нужды

Кредитный потребительский кооператив “Содружество”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
62-6-86, 8 900 333 0001
для пайщиков кооператива

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92.** 16-23.

7 марта в РДК с. Моргауши с 9 ч. до 16 ч. состоится продажа обуви из натуральной кожи производства г. Ульяновск и Белоруссии. Осень. Зима.

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин
Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.
Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00. 8-10.**

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 9-68.

Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
- Представительство интересов в судах;
- Подготовка исков, договоров, жалоб;
- Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
- Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
- Услуги по оценке недвижимости;
- Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
- Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
- Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.

**Цифровое спутниковое телевидение
ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб.
Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 8-10.**

**-25% УСПЕЙ КУПИТЬ с 10 февраля по 10 марта
СКИДКА НА ВТОРОЙ ТОВАР В ЧЕКЕ
~~14560~~ 10920 РУБ.**
Стиральная машина LG F-10B9LD
Загрузка 5 кг
Отжим 1000 об/мин
Класс эффективности А
Скидка предоставляется при единовременной покупке двух (или более) товаров. При наличии двух товаров в одном чеке на второй товар, меньший по стоимости, чем первый, предоставляется скидка в размере 25%. Количество товаров ограничено. Подробности проведения акции уточняйте у продавцов-консультантов. Организатор акции: ИП Дмитриев Ю.С., ИНН 210601747688.

БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (сторца здания Дома быта).
Тел.: 62-3-80. 4-10.**

Василий Александрович БЕЛОВ



2014 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче ял хуçалăх ĕçне чунĕпе парăннă Василий Александрович Белов пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Сакăр вун пĕр çулхи хастар çын кун-çулĕ татăлни – пирĕншĕн пуриншĕн те пысăк çухату.

В.А. Белов 1933 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче кӳршĕри Етĕрне районĕнчи Ирçе ялĕнче çуралса ӳснĕ. Пуçламăш классенчех пуçарулăхпа, хăюлăхпа, тăрăшулăхпа палăрса тăнă. Шкул çулĕнчех хăй пурнăçне ял хуçалăх ĕçĕпе çыхăнтарма тĕллев лартнă. Çапла вара малашлăха çирĕп пăхаканскер хăй ĕмĕтне вăя кĕртнĕ.

Шкултан вĕренсе тухсан 1954 çулта ял хуçалăх институтне çул тытать. Çулсем иртсен алла диплом илнĕ çамрăк специалист хĕрӳ ĕçе пикенет, хăй пĕлĕвĕпе ăсталăхне хамăр районти Жданов ячĕпе хисепленекен хуçалăх агрономĕнче тĕрĕслеме пуçлать. Кирек епле ĕçе те ответлăха туйса пурнăçлать, хăй пултаруллăхне çӳллĕ шайра çирĕплетет. Кĕске хушăрах çамрăк специалист ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Ĕç кăтартăвне тата тăрăшулăхне кура ăна хуçалăх тилхепине тытса пыма шанаççĕ. 1970 – 1974 çулсенче Жданов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçинче тăрăшать. Çак тапхăрта кунта курăмлă ырă ĕç чылай палăрать.

Çавăнпах та ĕнтĕ Василий Александровичăн ĕç-хĕлне район тата республика шайĕнче çӳле хурса хакларĕç. Ăна чылай Хисеп грамотипе, Тав çырăвĕпе, паллăпа чысларĕç. Хăшне-пĕрне асăнса хăварни те вырăнлă пулĕ. Василий Белова 1970 çулта «Усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕшĕн» тата «Хастар ĕçшĕн» медальсемпе хисеп тунă. Ял хуçалăх ĕçне яланах мала хуратчĕ. Чăн-чăн çĕр çынни пулнăран уй-хир пахалăхĕ тата пушă выртакан çĕр çине пысăк тимлĕх уйăратчĕ. 1983 çулта вăл «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ» ята тивĕçрĕ.

Мĕн ачаллах пурнăç тутимасине активнĕ май çĕр ĕçченĕн хуйхи-суйхине аван ăнланатчĕ. Обществăлла ĕçе активлă хутшăнатчĕ. Тĕрĕслĕх çулĕпе çĕр-çĕр çынна илсе кайма пултаратчĕ. Республика шайĕнчи тата ун тулашĕнчи канашлусенче, пухусенче вăл кирек хăçан та çынсен интересĕсене хӳтĕлессишĕн çунатчĕ. Ял хуçалăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнă Василий Александрович Беловăн ырă ĕçĕ тата сăнарĕ яланах пирĕн асăмăрта пулĕ.

Муркаш район администрацийĕ тата пĕр вăхăтра ĕçленĕ юлташĕсем.

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 1-10.**

* * *

**Продаю кованые вешалки цветочницы, подставки для обуви (галошницы), скобы строительные; изготовлю кованые элементы (волюты, вензеля) для оград, заборов, козырьков, оконных решеток, перил, мангалов и т. д. Недорого.
Тел.: 8-903-065-48-78, 66-3-50.**

* * *

**2 уйăхри вăкăр тата тюклана утă сутатăп.
Тел.: 8-905-029-06-44.**

* * *

Продаю сено. Тел.: 8-960-302-60-47.

* * *

**В Моргаушский кирпичный завод требуется водитель на автомобиль КамАЗ.
Тел.: 8-927-858-55-22. 1-3.**

* * *

**Тăваткал тюклана утă сутатпăр.
Тел.: 8-962-701-93-21, 8-906-383-46-80.**

* * *

**Утă сутатăп. Кĕртекасси ялĕ.
Тел.: 8-927-848-55-51.**

* * *

Продаются двухметровые горбыли в упаковке, а также доски 2м. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.

* * *

Требуются работники станочных и строительных специальностей, а также разнорабочие, упаковщицы, з/п достойная, официальное бесплатное трудоустройство. Тел.: 8-962-321-63-08. Мария Михайловна. 1-2.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ, ĕç ветеранĕ, нумай çул хушши «Нива» пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçинче, тĕп агрономĕнче ĕçленĕ, Мăн Хураçка ялĕнче пурăннă

Василий Александрович БЕЛОВ

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем, ачисемпе тăванĕсем чĕререн хурланса пĕлтереççĕ.

Атапайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта воспитательте ĕçлекен О.П. Вязовăн

ХУНЬАШШĔ

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Хаçатăн çитес номерĕ мартăн 7-мĕшĕнче тухать.

Прогноз погоды

	среда 5 марта				четверг 6 марта				пятница 7 марта				суббота 8 марта				воскресенье 9 марта		
Местное время	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16
Облачность %																			
Осадки мм																			
Температура °С	-5	-6	-4	-5	-4	-3	-1	-4	-5	-4	-2	-4	-3	-2	-1	0	+1	0	0
Давление мм	753	754	754	756	756	758	758	759	759	760	760	760	760	760	759	756	753	751	751
Влажность %	76	82	75	83	81	90	72	86	84	88	71	83	80	89	81	84	82	90	78
Ветер м/сек	2	1	1	1	3	3	1	2	2	2	4	4	4	4	6	7	7	6	5
	Ю	В	С	З	З	С-З	С	З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З
Солнце восход / заход		07:32	18:35			07:30	18:37			07:27	18:39			07:25	18:42		07:22	18:44	
Луна восход / заход		08:56	-			09:26	00:18			10:01	01:26			10:42	02:26		11:29	03:19	

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 04.03.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5125.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.